**Малалла**

... Хӗн-хур курнӑ кун иртрӗ...

Пӗр-пӗринчен пӗрлешсе

Тӑчӗҫ «ҫӗрпе ирӗкшӗн»,

Ҫӗрӗ халь пире тухрӗ.

Пуриншӗн те пуҫ ҫине

Хӗрлӗ ялав ҫӗкленчӗ,

Пирӗн юнпа хӗрелчӗ,

Куҫҫульсемпе ҫӑвӑнчӗ.

Хӑпса ялав хыҫӗнчен,

Пысӑк ӗҫе пӗтерме

Ӗҫлӗ халӑх эртелӗ

Пысӑк вӑрҫалла утрӗ...

Хамӑр тӑвас ӗҫ патне

Эпӗр хамӑр ҫитрӗмӗр.

Ку ӗҫ пире йывӑр пулчӗ —

Ҫырмапала юн юхрӗ.

Пит ҫирӗппӗн пӗрлешер,

Шур усала пӗтерер,

Хамӑр ӳснӗ ҫӗршыва

Кӑларӑпӑр ҫутталла,

Ялавне те ҫӳлелле

Ҫӗклӗр! Юлташ, малалла!

*Ахах, И. Малалла : [сăвă] // Ахах, И. Атьăр социализмшăн çапăçма / И. Ахах. – Шупашкар, 1972. – С. 49-50.*